27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 МАРТ 29 ЮННУН 63(6668) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖЛЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, питех те вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, паян, мартӑн 28-мӗшӗнче, Украинӑри пысӑк область тата промышленность центрне — НИКОЛАЕВ хулине — чугун ҫулӑн паха узелне, Хура тинӗс ҫинчи пысӑк портсенчен пӗрне, нимӗҫсен Кӑнтӑр Буг шывӗн вӑрри патӗнчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне — штурмласа туртса илнӗ.

НИКОЛАЕВ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ЦВЕТАЕВ генерал-полковникӑн, ГРЕЧКИН генерал-лейтенантӑн, ШЛЕМИН генерал-лейтенантӑн, БЕЛОВ генерал-майорӑн, ГОРОХОВ генерал-майорӑн, РУБАНЮК генерал-майорӑн, МАРГЕЛОВ полковникӑн, ДОРОФЕЕВ полковникӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн СВИРИДОВАН танкисчӗсем, артиллери генерал-лейтенанчӗн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорӗн ОСМОЛОВСКИН, СОЛОВЬЕВ полковникӑн, НИКИТИН полковникӑн, ПОПОВ подполковникӑн артиллеристӗсем, авиаци генерал-полковникӗн СУДЕЦАН летчикӗсем, инженернӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КОТЛЯРАН саперӗсем тата КОТАНОВ майорӑн морякӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ӗлкӗлӗ палӑртса хӑварас тесе, НИКОЛАЕВ хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисене тата чаҫсене «НИКОЛАЕВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 28-мӗшӗнче, 22 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, нисӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑран ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, НИКОЛАЕВ хулине ирӗке кӑларнӑ УКРАИНАРИ 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, НИКОЛАЕВ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗшӗн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 28-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 27-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени вӑйлатса пырса, ӗнер, мартӑн 26-мӗшӗнче танковӑй соединенисен хӗтӗ ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапнипе, Украинӑн область центрӗ пулса тӑракан КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСКИ хулине — нимӗҫсен ДНЕСТР ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне — туртса илнӗ. КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче СМИРНОВ полковникӑн, ЖУКОВ полковникӑн, ДЕНИСОВ полковникӑн, ФОМИЧЕВ полковникӑн, МЕДВЕДЕВ полковникӑн, ТУРКИН полковникӑн, РЫБЯЖ полковникӑн, РУБАСОВ полковникӑн, КОТЕЛЬНИКОВ полковникӑн, НЕЧИПОРЕНКО полковникӑн, ЕПИФАНОВ полковникӑн, СЕЛИВАНЧИН полковникӑн, СКИРДА подполковникӑн, ГОРОХОВ полковникӑн, ПАРХОМЕНКО полковникӑн, НИКОЛЮК полковникӑн, ДИДЕНКО подполковникӑн, КОЗЛОВ майорӑн, ЯШАНИН подполковникӑн, КУРЧАТНИН майорӑн, ВЛАСЬКИН подполковникӑн, АРТЕЕВ майорӑн, ЧАПИЛЬ майорӑн, ИАКИМОВ подполковникӑн, ГУДИМОВ подполковникӑн, СЕРГЕЕВ подполковникӑн чаҫӗсем чапа тухнӑ.

Мартӑн 27-мӗшӗнче УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Тарнополь облаҫӗнчи район центрӗсене — МОНАСТЫРИСКА хулине тата КОРОПЕЦ, ЗОЛОТОЙ ПОТОК ялӗсене, КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК облаҫӗнчи район центрӗсене — ЯРОМЛИНЦЫ хулине тата СМОТРИЧЬ, ВОЙКОВЦЫ, НОВАЯ УШИЦА, ДОЛЖОК ялӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 80 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ЛЕНЧУВКА, ГОЛГОЧЕ, ШВЕЙКУВ, БАРЫШ, ПОРХОВА, СОКОЛУВ, СЛОВИДУВ, КОСЦЕЛЬНИКИ, БЕРЕМЯНЫ, ЛОТАЧ, КАДИЕВЦЫ, ШАРОВКА, ПЕТРАШИ, ДАШКОВЦЫ, ГОВОРЫ, ПУЧА ятлӑ пысӑк ялсем. Фронт ҫарӗсем ДНЕСТР шывӗ урлӑ ӑнӑҫлӑ каҫнӑ та Станислав облаҫӗнчи район центрне — ГОРОДЕНКО хулипе пысӑк чугун ҫул станцине, Черновицы облаҫӗнчи район центрӗсене — ЗАСТАВНЯ хулипе САДАГУРА ялне туртса илнӗ.

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, ДНЕСТРПА ПРУТ шывӗсем хушшинче наступлени ҫаплах вӑйлатса пырса, Молдаван ССР-ӗнчи район центрӗсене — БРИЧАНЫ хулипе СКУЛЯНЫ ялне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — МИХАЛКОВА, РОМАНКОВЦЫ, ШУБУТИНЦЫ, ЯНОУЦЫ, БУЖОВИЦЫ, НОВОСЕЛЬЦЫ, ТАБАНЫ, КАРАКУШАНЫ, КОРЖЕУЦЫ, ТИЦКАНЫ, КАРПАЧ, КОСТЕШТЫ, БРАНЕШТЫ, КУХНЕШТЫ, КАЛИНЕШТЫ, СТОЛНИЧАНЫ, СКУМПИЯ, МАРАНДЕНИ ятлӑ пысӑк ялсем тата РОМАНКОВЦЫ, ВАСКАУЦЫ, ЯРНАУЦЫ, МАРАНДЕНИ, КАТРАНЫК, СКУМПИЯ, СТОЛНИЧАНЫ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ПЕРВОМАЙСК хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, Одесса облаҫӗнчи САВРАНЬ район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса ытти 30 яла ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — БАЙБУЗОВКА, БАКША, КАПУСТЯНКА, СТРУТИНКА, МИХАЛКОВО, ОЧЕРЕТНЯ, ТРИДУБЫ, БУРИЛОВО, СЕКРЕТАРКА, ЛЕНИНО, БОГАЧЕВКА, КОНЕЦПОЛЬ, ГОЛТА, ГРУШЕВКА.

НИКОЛАЕВ хули енче пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса БАЛОВНАЯ, МАТВЕЕВКА, ТЕРНОВКА (НИКОЛАЕВ хулинчен 4 километр ҫурҫӗртерехре), ВОДОПОЙ ялӗсене туртса илнӗ те тӑшманпа НИКОЛАЕВ хули тулашӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 26-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 28 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 19 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем ӗнер, Украинӑн область центрне—Каменец-Подольск хулине туртса илнӗ. Нимӗҫсем Каменец-Подольск хулине хӑйсен Днестр ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ туса хунӑ. Смотричпе Мукша шывӗсем хулап хӗвелапӑҫ тата хӗвелтухӑҫ хӗррипе юхса выртаҫҫӗ, вӗсем хӑйсен чӑнкӑ та ҫӳллӗ ҫыранӗсемпе лайӑх оборона рубежӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Анчах та пирӗн ҫарсем ҫав тери сасартӑк пырса ҫапнипе, нимӗҫсем хӑйсен оборона позицийӗсен лайӑх енӗсемпе усӑ курса юлайман. Совет танкисчӗсемпе пехотинецӗсем, ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, Каменец-Подольск хулине пур енчен те вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та урамсенче пуҫланса кайнӑ хаяр ҫапӑҫусенче нимӗҫсен гарнизонне йӑлтах аркатса тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем хулара трофейӗсем нумай тытса илнӗ.

Ярмолинцы хули районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Юлашки кунсем хушшинче тӑшман хӑйӗн танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсемпе контратакӑсем тунӑ, хӑйӗн вӑйӗсем темӗн чухлӗ нумай пӗтсе пынӑ пулин те, вӑл ҫак тӗреклӗ пункта хӑй аллинче тытса тӑма тӑрӑшнӑ. Пирӗн ҫарсем нимӗҫсен контратакисене сире-сире янӑ, вӗсен ҫыннисемпе техникине пӗтерсе пынӑ. Паян ҫурҫӗр енчен тата хӗвеланӑҫӗнчен татӑклӑ пырса ҫапса, совет боецӗсем Ярмолинцы хулине туртса илнӗ. Малтанлӑха пухнӑ даннӑйсем тӑрӑх, ку районри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 100 танк ытла тата 5.000 салтакпа офицера ҫити пӗтнӗ. Пирӗн ытти чаҫсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, Каменец-Подольск облаҫӗнчи Воньковцы район центрне туртса илнӗ, нимӗҫсенчен юсавлӑ 15 танк, 100 тупӑ ытла, 18 бронемашина, 24 бронетранспортер, темиҫе ҫӗр автомашина, 2 боеприпас склачӗ тата 5 апат-ҫимӗҫ склачӗ тытса илнӗ. Зяньковцы районӗнче хӑраса ӳксе каялла чакакан гитлеровецсем тӗрлӗ калибрлӑ 80 тупӑ пӑрахса хӑварнӑ.

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем анлӑ фронтпа Днестр шывӗ ҫине тухнӑ та чылай каҫӑ туртса илнӗ. Ҫавӑнтах пӗр чаҫӗ тӑмасӑр Днестр урлӑ каҫнӑ та пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен чаҫсем паян Станислав облаҫӗнчи район центрне —Городенка хулипе пысӑк чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Городенка хулишӗн пынӑ ҫапӑҫура венгерсен пехотин пӗр полкне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ытти соединенисем, малалла хӑвӑрт куҫса пырса, Черновицы облаҫӗнчи район центрне —Заставна хулине тата Садагура район центрне (Черновицы хулинчен ҫурҫӗртерехре) туртса илнӗ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем Днестрпа Прут шывӗсем хушшинче наступление вӑйлатса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем 20 километр малалла куҫнӑ та халӑх пурӑнакан чылай пунктсене, вӑл шутра Бричаны хулине, туртса илнӗ. Совет ҫарӗсем пыра-пыра ҫапнипе пин тӗллӗ-паллӗ лисӗр каялла чакакан тӑшман йывӑр ҫухатусем тӳсет. Пӗр районра пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен отряд тӑшман тылне кӗрсе кайнӑ та тӑшман пехотин полкне аркатса тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн танксем чугун ҫул станцине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та 1000 нимӗҫпе румына ытла пӗтерсе тӑкнӑ, вӗсем вагонсем ҫине ларма хатӗрленсе тӑнӑ пулнӑ. Тупӑсем тата ҫар пурлӑхӗ тиенӗ автомашинӑсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Николаев хули енче пирӗн ҫарсем ҫаплах тӑшманпа ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ. Николаев хулинчен ҫурҫӗтерехре пӗр соединени боецӗсем, тӑшман хытӑ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, Баловная, Матвеевка тата Терновка ялӗсене туртса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн темиҫе ҫӗр вилли выртса юлнӑ. Пирӗн ытти чаҫсем, ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, Водопой ялне туртса илнӗ те тӑшманпа Николаев хули тулашӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ.

* * *

Финн заливӗнче тӑшманӑн тральщикне тата хуралта ҫӳрекен карапӗпе катерне шыва путарнӑ

* * *

Тарнополь облаҫӗнче кӗрешекен украинец партизанӗсен отрячӗ кӗтмен ҫӗртен нимӗҫсен гарнизонне тапӑннӑ. Партизансем тӑшманӑн 120 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 22 ҫынна тыткӑна илнӗ. 11 пулемет, 4 миномет, 100 винтовкӑпа автомат ытла тытса илнӗ. Молдаван партизанӗсен ушкӑнӗ пӗр чугун ҫул станцине кӗрсе кайнӑ та, нимӗҫ хуралҫисене вӗлерсе пӗтерсе, боеприпас складне сирпӗнтерсе янӑ.

Римский-Корсаков ҫуралнӑранпа 100 ҫул тултарнине паллӑ туни

Николай Андреевич Римский-Корсаков ҫуралнӑранпа 100 ҫул тултарнине Шупашкар хулинчи общественность вырӑс культурин уяв кунӗ вырӑнне хурса паллӑ туса ирттерчӗ.

Чӑвашсен Государство Академи театрӗнче аслӑ композитор ҫуралнӑранпа 100 ҫул тултарнӑ ятпа чаплӑ лару пулса иртрӗ. Пухура Римский-Корсаковӑн пурнӑҫӗпе творчестви ҫинчен Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Искусство ӗҫӗсен управленийӗн начальникӗ А. Кӑлкан юлташ доклад туса пачӗ.

Вуннӑлӗк опера, ҫавӑн чухлех симфониллӗ произведенисем, ҫитмӗл тӑхӑр романс, виҫӗ кантата тата ытти нумай тӗрлӗ юрӑсемпе кӗвӗсем, — ҫаксем пурлӑхне ӗнтӗ композитор тӗнчене калаласа хӑварнӑ пуянлӑхсем. Римский-Корсаков творчестви музыка искусствине малалла аталантарса пырас ӗҫре паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Римский-Корсаковран пирӗн ҫамрӑк композиторсем вӗренсе пыраҫҫӗ. Аслӑ композитор хӑйӗн творчествипе ирлекенсен чӗрине тӑван ҫӗршыва юратас туйӑма ҫӗклеме тӑрӑшнӑ. Мӗншӗн тесен вӑл хӑйӗн халӑхӗн телейлӗ пуласлӑхне курса тӑнӑ.

Доклад хыҫҫӑн Чӑвашсен государство филармонийӗ концерт пачӗ. Чӑваш АССР искусствин тава тивӗҫлӗ деятелӗ Токмаков юлташ ертсе пынипе Римский-Корсаковӑн «Царская невеста» оперин 2-мӗш актне выляса пачӗҫ.

Чӑвашсен юрӑпа ташӑ ансамблӗ, филармони солисчӗсем Римский-Корсаковӑн юррисемпе романсӗсене юрласа пачӗҫ.

Арми генералӗ Р. Я. МАЛИНОВСКИЙ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн историллӗ ҫӗнтерӗвӗсем совет тылӗнчи ӗҫҫыннисене фронтшӑн паттӑрла ҫӗнӗ ӗҫсем тума хавхалантараҫҫӗ

Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсемпе хавасланса

Шупашкарти чӑлха фабрикинчи пур цехсенче те Хӗрлӗ Ҫар государство чиккине тухнӑ ятпа митингсем пулса иртрӗҫ. Рабочисемпе работницӑсем, инженерла-техникла работниксем мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара чӗререн тав тӑваҫҫӗ, фронта пулӑшассишӗн вӑй-хӑвата шеллемесӗр ӗҫлеме пулаҫҫӗ.

Стахановка Матюшко юлташ, Хӗрлӗ Ҫар ҫитӗнӗвӗсене саламласа, ӗҫ нормине кунсерен 120-шер процент тултарма сӑмах пачӗ. Ҫавӑн пекех Мухина тата ытти нумай юлташсем нормӑна 150 процент таран тултарса ӗҫлеме пулчӗҫ. Малкина юлташ ертсе пыракан цех кварталти плана 110—115 процент тултарма сӑмах пачӗ.

Фабрикӑра производствӑри ҫӗкленӳ ӳссех пырать.

Ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫара—мухтав!

КАНАШ, мартӑн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). Мартӑн 26-мӗшӗ—совет халӑхӗшӗн асран кайми кун. Ҫав кун эпир Хӗрлӗ Ҫар ССР Союзӗн государство чиккине—Прут шывӗ ҫине тухни ҫинчен калакан хыпара пӗтӗм чӗререн савӑнса итлерӗмӗр. Пирӗн государство чиккин малтанхи 85 километрне Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑларчӗ,— ку вӑл историре питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан событи! Ку хыпар пирӗн вагонсем юсакан заводри цехсем тӑрӑх ҫиҫӗм пек саралчӗ. Ӗнер пур цехсенче те митингсем пулса иртрӗҫ. Вӗсенче рабочисемпе работницӑсем паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн геройлла ӗҫӗсемшӗн савӑннине, фронтшӑн, ҫӗнтерӳшӗн вӑл шеллемесӗр ӗҫлеме хатӗр пулнине кӑтартса пачӗҫ.

Литейнӑй цех коллективӗ (начальникӗ Дмитриев юлташ), государство чиккине тухнӑ тата гитлерла захватчиксене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре аслӑ ҫӗнтерӳ тунӑ Хӗрлӗ Ҫара тав туса, март уйӑхӗнчи плана 117 процентран кая мар тултарма обязательство илчӗ.

Рабочисем хӑйсен сӑмахӗсене ӗҫпе пурнӑҫлаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, Ласточкин, Алексеев, Буряк, Петров, Заворотняк, Зотова юлташсем хӑйсен пӗр кунхи нормисене 300—400-шер процент тултарчӗҫ.

Ҫавӑн пекех Забилкин юлташ начальник пулса ӗҫлекен цехри рабочисем те ҫак кунсенче хӑйсен ӗҫне чылай лайӑхлатрӗҫ. Слесарь Старостин юлташ пӗр кунхи нормӑна 797 процент, Морунов—606 процент, Морозов — 434 процент, токарь Карпеева — 436 процент тултарчӗҫ.

— Эпир, тылра та фронтри пек ӗҫлесе, Хӗрлӗ Ҫара хӑйӗн тӗрӗс задачине малашне те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пыма пулӑшӑпӑр —теҫҫӗ рабочисем.

П. ЕГОРУШКИН,
Партбюро секретарӗ.

Тӑшманӑн кунҫулӗ пӗтсе пырать

ВӐРМАР, мартӑн 27-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем государство чиккин патне ҫитни ҫинчен радио тӑрӑх пӗлтернине ӗҫҫыннисем пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илчӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнӗ ҫӗнтерӳ тунӑ ятпа колхозсемпе предприятисенче тата промысловӑй артелӗсенче митингсемпе пухусем пулса иртеҫҫӗ.

— Тӑшман кунҫулӗ пӗтсе пырать. Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар тунӑ ҫӗнтерӳсем, Хӗрлӗ Ҫар государство чиккине ҫитни пире татах та хастартарах ӗҫлеме чӗнет. Эпир производство планне уйӑхран уйӑха ирттерсе тултаратпӑр. Малашне вӑй-хӑвата шеллемесӗр ӗҫлесе, татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвӑпӑр, ҫапла Хӗрлӗ Ҫара пулӑшӑпӑр, — терӗ Осипенко ячӗпе тӑракан артельте пулса иртнӗ митингра Александров юлташ.

Ҫав митингра тухса калакансем пурте, Хӗрлӗ Ҫара тав туса, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеме пулчӗҫ. Кашни работникпа ӗҫ нормине икӗ хут ирттерсе тултарма сӑмах пачӗ.

Артель коллективӗ, май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, хӑй ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗ.

Производствӑри ҫӗнӗ ҫӗкленӳ

ИӖПРЕҪ, мартӑн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). Хӗрлӗ Ҫар государство чиккине тухни ҫинчен савӑнӑҫлӑ хыпар илнӗ ятпа ӗнер вӑрманпромхозри рабочисемпе инженерла-техникла работниксен тата служащисен пухӑвӗ пулса иртрӗ.

— Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗ, — терӗ пухура мастер Аксянов юлташ, — фронтшӑн, ҫӗнтерӳшӗн пӗтӗм вӑй-хӑвата хурса ӗҫлеме хавхалантарать. Хӗрлӗ Ҫара чӗререн тав туса, эпӗ производство планне срокчен тултарма пулатӑп. Малашне ӗҫ тӑшмана хамӑр ҫӗршывран хӑвӑртрах кӑларса ывӑтма пулӑштӑр.

Вӑрманпромхоз коллективӗ питех те кирлӗ заказсене срокчен пурнӑҫа кӗртме тата плана ирттерсе тултарма пулчӗ. Нумай рабочисем обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртессишӗн тимлӗн ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Мастер Аксянов икӗ кун хушшинче 300 кубометр йывӑҫ турттарттарнӑ. Хальхи хӑвӑртлӑхсемпе ӗҫлесен, вӑл плана темиҫе хут ирттерсе тултарма пултарать.

Маршалсен „Маршал Ҫӑлтӑрӗ“ ятлӑ паллине пани

Мартӑн 25-мӗшӗнче СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ артиллери Маршалне Н. Д. Яковлева, бронетанковӑй ҫарсен маршалне Я. Н. Федоренкӑпа тата ҫыхӑну ҫарӗсен Маршалне И. Т. Пересыпкина Маршалсен «Маршал Ҫӑлтӑрӗ» ятлӑ паллине пачӗ. (ТАСС).

Чугун ҫул валли—вутӑ

Планран ирттерсе вутӑ хатӗрлеҫҫӗ

ВӐРНАР, мартӑн 26-мӗшӗ. (Телефонпа). Вӑрман хуҫалӑхӗ чугун ҫул валли вутӑ хатӗрлемелли ҫулталӑкри плана пӗр уйӑх каярах пурнӑҫларӗ. Халӗ кунти рабочисемпе работницӑсем чугун ҫул валли планран ирттерсе вутӑ хатӗрлесе тӑраҫҫӗ. Ҫавӑн пекех вӑрман хуҫалӑхӗ экстракт вутти хатӗрлемелли задание те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӗ. Паллӑ стахановкӑсем А. Волкова, А. Прохорова юлташсем задание кашни кунах 200 процент тултарса пыраҫҫӗ.

А. ГРИГОРЬЕВ.
Вӑрман хуҫалӑхӗн директорӗ.

Элӗксем ҫаплах юлса пыраҫҫӗ

ЭЛӖК. Район чугун ҫул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлес тӗлӗшпе ҫаплах юлса пырать. Ҫакӑ вӑл, пӗр енчен, район руководителӗсем ку ӗҫ ҫине ҫителӗксӗр ҫавӑрӑнса пӑхнинчен тата колхозсен правленийӗсем мобилизациленӗ колхозниксене час-часах кипе тавӑрӑнса ҫурӑнма ирӗк панинчен, вӑрманта ӗҫ мӗнле пынипе интересленменнинчен килет.

«Самолет» колхоз председателӗ Фадеев юлташ час-часах вӑрман хатӗрлевӗ ҫинчен калаҫать, анчах хӑй пӗрре те вӑрмана кайса курман тата вӑрмана янӑ колхозниксем мӗнле ӗҫлесе пынине те тӗрӗслемест. Ҫавна пула кунта вӑрманта ӗҫлекенсенчен чылайӗшӗсем килте е урӑх ҫӗрте ҫӳреҫҫӗ, ӗҫлекеннисем те япӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Вырӑс Сорм, Тукташ, Яргуньках ялсовечӗсем вӑрман хатӗрлемелли плана 40—50 процент ҫеҫ тултарнӑ, мӗншӗн тесен вӑл ялсовечӗсенчен ҫын питӗ сахал ӗҫлет. Ҫапах та ялсовет руководителӗсем вӑл енӗпе конкретнӑй мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

Уйрӑм ялсовечӗсемпе колхозсен вӑрман хатӗрлевне активлӑн хутшӑнмалла. «Красная заря» колхоз членӗсем, акӑ, Шӑхасан районӗнчи колхозниксем чӗнсе каланине сӳтсе-явса, вӑрман хатӗрлевне активлӑн хутшӑнчӗҫ. Вӗсем хушшинче ӑмӑрту анлӑн саралса кайрӗ. Харитонова, Федорова, Осипов юлташсем нормӑна 150 процент тултараҫҫӗ. Ҫаксем пек ӗҫлемелле ыттисен те. Вара район хӑйне панӑ задание ӑнӑҫлӑн тултарӗ.

Х. ЛИСИН.

Хӗрлӗ ялавлӑ колхозра

СӖНТӖР. («Чӑваш Коммуни» корр.). Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ хӑйсен куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне «Ҫӗнӗ Юнкӑ» колхоза панӑ. Ҫак колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре чӑнах та пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Иртнӗ ҫулта 53 ӗнерен 53 пӑру илсе пӑхса ҫитӗнтернӗ. Пӑрусене пӑхнӑ ҫӗрте уйрӑмах Ульяна Каптурина тӑрӑшса ӗҫлет. Вӑл сӗт куҫа илмелли плана та ирттерсе тултарнӑ. Ҫавӑншӑн ӑна ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗркепе тӑрӑх 175 литр сӗт панӑ.

Сысна пӑхакансен ӗҫӗ ытла та пархатарлӑ. Вӗсем 1943 ҫулта 20 амаран 398 ҫӑвӑр илнӗ, урӑхла каласан, кашни амаран вӑтам шутпа 19,5 ҫӑвӑр илнӗ. Пурне те тӗрӗс-тӗкӗл пӑхса ҫитӗнтернӗ. Республикипе паллӑ свинарка Фекла Вазикова (фермӑра вӑл 10 ҫул ӗҫлет ӗнтӗ) кашни амаран 22-шер ҫӑвӑр пӑхса ҫитӗнтернӗ. Тухӑҫлӑ ӗҫшӗн Вазикова юлташа 9 ҫӑвӑр панӑ. Кӑҫал вӑл тата лайӑхрах ӗҫлеме пулчӗ.

«Ҫӗнӗ Юнкӑ» колхоз иртнӗ ҫулта сурӑхсемпе чӑх-чӗпсем ӗрчетмелли плансене те ытлашшипех тултарнӑ.

Колхозра лашасен йышне ӳстерес, вӗсене пӑхас тӗлӗшпе кӑтартуллӑ ӗҫлеҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра план тӑрӑх лашасем 110 пуҫ пулмалла, 124 пуҫ пур. Кӗсресене май пур таран лайӑх пӑхаҫҫӗ. Ӗҫне кура —тивлечӗ. Иртнӗ ҫулта колхоза 12 тиха пӑхса илме план панӑ пулнӑ. Чӑннипе 23 кӗсререн 23 тиха пӑхса ҫитӗнтернӗ.

Конюхсем—хӑйсен ӗҫне пӗлекен тата юратакан ҫынсем. 3-мӗшпе 4-мӗш бригадӑсен лашисене пӑхакан старши конюх Варвара Кудряшова 8 ҫул ӗнтӗ ҫак ӗҫрен уйӑрӑлмасть. Вӑл кашни лашан уйрӑмлӑхне, ӑна мӗнле пӑхмаллине пӗлет. Уйрӑмах тихаллӑ кӗсресене астуса пӑхать. Ҫапла вӑл пӗлтӗр 13 кӗсререн 13 тиха пӑхса илнӗ. Тихасене лайӑх пӑхса ҫитӗнтернӗшӗн ӑна 84 килограмм тырӑ панӑ.

Лашасене пӑхнӑ ҫӗрте ҫирӗп йӗрке тунӑ: вӑхӑтра шӑвараҫҫӗ, вӑхӑтра апат параҫҫӗ, кашни кун тасатаҫҫӗ. Тислӗке кӑларсах тӑраҫҫӗ. Кашни лашана колхозник ҫумне ҫирӗплетсе панӑ. Кашни лашан хӑйӗн кӳлмелли хатӗрӗсем пур. Колхозниксем хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ лашапа кӳлмелли хатӗрсемшӗн ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Правлени председателӗ ирӗк памасӑр витерен никам та лаша тытса тухма пултараймасть.

Лашасене ҫуракине мӗнле кӑларасси ҫинчен правлени ларӑвӗнче сӳтсе-явнӑ. Халӗ ака-суха валли уйӑрнӑ лашасене ытларах кантараҫҫӗ. Ӗҫӑ кунсем пуҫланнӑ май, апата шывпа йӗпетсе тата ҫӑнӑх сапса параҫҫӗ. Пӗр ытам утӑма та сая ямаҫҫӗ.

Т. ИВАНОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Колхозсен вăрлăх фондне

ÇАК КОЛХОЗНИКСЕМ—ТАВАН ÇĔРШЫВĂН ÇУЛĂМЛА ПАТРИОЧĔСЕМ ХĂЙСЕН ЗАПАСĔСЕНЧЕН ХЫВНĂ:

М. ПАВЛОВ—Красноармейски районĕнчи «Трудовик» колхоз председателĕ—5 пăт тырă.
Г. ЯКОВЛЕВ—çав колхозри колхозник—3 пăт тырă.
Е. АНТОНОВА—çав колхозри колхозница—3 пăт тырă.
Ф. КОНДРАТЬЕВ—çав колхозри счетовод—5 пăт тырă.
Ф. КРАСНОВ—çав колхозри колхозник—3 пăт тырă.
П. КУЗЬМИН—çав колхозри колхозник—4 пăт тырă.
Д. ХОХЛАТКИНА—Калининско районĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхозри колхозница—15 пăт тырă.
Ф. НИКИТИН—çав колхозри колхозник—6 пăт пăрçа.
С. НИКИТИН—çав колхозри колхозник—6 пăт пăрçа.

Ÿкерчĕк çинче: Гачĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз председателĕ А. А. Клементьев юлташ. [illegible] «Осоавиахим» колхоз [illegible] «Красные Темяши» колхоза 15 центнер [illegible] вăрлăх парса пулăшнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК. Районри уйрăм колхозсен çуртырри вăрлăхĕ çитмест. Вăл «Коминтерн», «Красные Темяши» тата «Коммунист» колхозсен вăрлăх [illegible] çитмест. Кÿршĕри колхозсем вĕсене [illegible] пулăшаççĕ. «Коминтерн» колхоза «Новый путь» колхоз 20 гектар, «Красное знамя» колхоз 15 гектар, «Путь Ленина» колхоз 10 гектар акса парать. Çавăн пекех «Красные Темяши» колхоза «Осоавиахим», Пушкин тата Крупская ячĕсемпе тăракан колхозсем акса пулăшаççĕ.

[illegible] пуçне колхозсем пĕр-пĕрне [illegible] Ку мелпа пурĕ 1.030 центнер вăрлăх улăштарнă. «Коммунист» колхозăн 108 центнер вăрлăх çитмест. Вăл колхоза «Новая волна» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăх парса пулăшаççĕ. [illegible] «Сатурн» колхоза 60 гектар акмалăх тырă парать. [illegible]

[illegible] бригадирĕсем М. Люлин, П. Емельянов, Д. Михайлов юлташсем кашниех икшер центнер панă, вĕсем хыççăн ытти колхозниксем те пĕр центнер çуршар, икшер центнер панă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз [illegible] Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем колхоза 20 центнер панă. «Комбайн» колхоз членĕсем 16 центнер, «Марс» колхоз членĕсем 36 центнер пухнă. Çак колхозăн председателĕ А. Глазов юлташ 12 пăт панă. [illegible] «Марс» колхоз [illegible]

[illegible]

[illegible] çĕрулми вăрлăхне кунта колхозниксен пухма пур майсем те пур. Ку ĕçе халех организацилемелле, колхозниксен ... анлă массине явăçтармалла.

В. АКЧЕЛ.

Пĕр ялсоветĕнчи виçĕ колхозра

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Йÿç Шăхаль ялсоветне кĕрекен «Ударный» (председателĕ Герасимов), «КИМ» (председателĕ Тимофеев) колхозсем çуракинче акма кирлĕ вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитернĕ, тасатса сортланă. «КИМ» колхоз кăçалхи çул планран иртгерсе 50 гектар çуртырри акса хăварма шутлать. Çак лаптăк валли те кунта вăрлăх хатĕрленĕ тата ăна тасатса сортланă. Ялхуçалăх машинисене, лаша кÿлмелли хатĕрсене юсаса çитерчĕç тата вĕсене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе хучĕç. Çуракине тухма вăйсăртарах лашасене уйрăмăн пăхас ĕçе йĕркелерĕç, çавăн пекех ытти лашасене те лайăх апат пама тытăнчĕç.

Анчах та Йÿç Шăхаль ялсоветне кĕрекен Литвинов ячĕпе тăракан колхоз çитес çуракине хатĕрленес ĕçре тĕлĕшпе паян кунччен те сÿрĕккĕн ĕçлет. Çак колхозăн руководителĕсем фронтовой уйăхлăхра тивĕçлĕ улшăнусем тăвассишĕн кĕрешÿ пуçарса яраймарĕç. Çавна пула, паян кунта 69 центнер пăрçа тата çĕрулми вăрлăхĕ чылай çитмест. Апла пулин те уйрăм колхозниксенчен вăрлăхсем пухас ĕçе йĕркелемен. Хатĕрлесе хунă вăрлăхсене сыхласа усрас тĕлĕшпе те тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Кун çинчен колхоз правленин членĕ Францев хăй патне хунă 8 пăт вăрлăхлăх улмана салатса янă тĕслĕх те кăтартса парать.

Çавăн пекех колхоз лашасене çуракине хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе те тивĕçлипе ĕçлемест. Кунта лашасене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе пани те ячĕшĕн анчах пулса пырать. Колхозниксем çирĕплетсе панă лашасем патне пырса та курмаççĕ. Лаша апачĕ çитмест, апла пулин те апата перекетлессишĕн кĕрешмеççĕ.

Ку колхозра агрокружок йĕркеленĕ пулнă, анчах та вăл хăйĕн ĕçне паян кунччен те пуçарса яман.

В. ДАВЫДОВ.
М. СОРОКИН.

Ĕçри хастарлăха ÿстерчĕ

КАНАШ. (Хамăр корр., телефонпа). Иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕшĕн пирĕн республикăна Оборона Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине памалла тунă колхозниксемпе колхозницăсене питех те савăнтарать. Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çак пысăк хисепе тивĕçлипе ответлеме пулчĕç. Вĕсем хăйсен умне кăçал 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес задача лартнă. Халĕ çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тепĕр хут тĕрĕслерĕç. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортланă, пăтас пахалăхĕ 98 процентран та иртет. Вăрлăхсене сортласа тасатас, кирлĕ пек кондицие лартас ĕнĕпе А. Евсеева, Д. Ятлашкина, Н. Кондратьева, И. Федорова колхозницăсем мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç.

Уя 9.000 лав тислĕк тăкнă, 200 центнер кĕл, 90 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата ытти удобренисем пухнă.

Колхозăн производствăллă планне туса колхозниксен аслă пухăвĕнче çирĕплетнĕ. Акана 9 кун хушшинче иртгерме тата тĕштырăсене пĕтĕмпех машинăсемпе акса хăварма шухнă. Доронин ячĕпе тăракан колхоз халь çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

Трактористсен ăмăртăвĕ

ЭЛĔК. Машинно-тракторнăй станци коллективĕ, Хĕрлĕ Çар воинĕсем туса пыракан çĕнтерÿсене ĕçпе ответлес тесе, ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пырĕ. Кунта тракторсемпе ытти машинăсене срокчен тата лайăх юсаса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Коммунист Васильев ертсе пыракан 7-мĕш бригада тракторсене январь уйăхĕнче, ытти машинăсене (3 плуга, 1 сеялкăна, 1 культиватора) февралĕн малтанхи кунĕсенчех юсаса пĕтернĕ. Трактористсем Федотов, Иванова тата Ксенофонтова юлташсем 14-шар сехет мастерскойран тухмасăр ĕçлерĕç. Халĕ вĕсем ытти бригадăсене пулăшаççĕ.

Ăмăртура Николаев бригади те аван тĕслĕхсем кăтартать. Ку бригада та февралĕн малтанхи кунĕсенчех мĕнпур тракторсемпе инвентарьсене юсаса пĕтерчĕ. Федот Митрофанов тата Алексей Митрофанов трактористсем хăйсен тракторĕсене питĕ лайăх юсарĕç.

Х. ЛИСИН.

Çĕрулми тăррине хатĕрлеççĕ

Куракинăри Отечественнăй аслă вăрçăн инвалидĕсен суртĕвĕ çĕрулми тăррине касса хатĕрлессине аван йĕркеленĕ. Паянхи кун тĕлне 25 пăт хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПАРТОРГАНИЗАЦИ ÇУМĔНЧИ АГИТКОЛЛЕКТИВ

ЭЛĔК. «Доброволец» колхоз иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра та лайăх пахалăхпа туса пынă. Вăл ноябрĕн 7-мĕшĕччен государствăна тырă тата ытти продуктсене парса татнă, авăн çапса пĕтернĕ. Çавăн хыççăн колхоз членĕсем хăйсем перекетлесе хăварнă тата общественнăй фондран государствăна 4.100 пăт тырă сутнă, Хĕрлĕ Çар фондне 14,21 центнер панă.

Кунта кашни ĕçлеме пултаракан колхозникех ĕçе активлăн хутшăнать. Çавăнта ĕнтĕ ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозник пĕрре те çук. Фронтовик арăмĕсем Елена Винокурова, Таисия Кошкина, Надежда Морозова, тимĕрçĕ пĕчĕк ачапах, çулталăк хушшинче 200—300-шер ĕçкунĕ тунă. Ватă колхозница А. Соколова—285 ĕçкунĕ тунă.

Колхоз хăйĕн ĕçне тивĕçлĕн туса пынă, чи малтанах колхозниксемпе колхозницăсем вăйа хурса ĕçленинчен килет. Ку тĕлĕшпе вĕсене ĕçре агитаторсем хавхалантарса пыраççĕ. Колхозри агитаторсем куллен масса хушшине тухса халăха çĕршыври хыпарсемпе, тăван Хĕрлĕ Çар туса пыракан пысăк çĕнтерÿсемпе паллаштараççĕ. Агитатор хăйĕн кашни калаçăвĕнче колхозниксене фронта пулăшас тĕлĕшпе мĕнпур вăйа хурса ĕçлеме, ытларах ялхуçалăх продукчĕсем пама чĕнет. Ăна колхозниксем тÿррĕн пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Татьяна Спиридоновăна—учительницăна агитатора 4-мĕш бригада çумне çирĕплетнĕ. Вăл яланах колхозниксем патĕнче пулса тĕрлĕ докладсем, калаçусем иртерет.

Çамрăк коммунисткăна — Мария Бочкова агитатора та час-часах колхозниксем ĕçленĕ çĕрте курма пулать. Вăл, ĕçре хăй пример кăтартнипе, агитаци ĕçне те аван туса пырать. Çав вăхăтрах Бочкова юлташ колхозри стена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлет. Нумаях пулмасть вăл хамăр земляк Совет Союзĕн Геройĕ Мирон Ефимов çинчен калакан документсемпе фотоÿкерчĕкĕсене пухса витрина организациленĕ.

Агитатор Николай Морозов — Отечественнăй аслă вăрçăн участникĕ—иртнĕ çулта 500 ĕçкунĕ ытла тунă. Бригадăри колхозниксем унтан пример илсе ĕçлеççĕ. Унăн мĕнпур калаçăвĕ те фронтпа çĕршыва ытларах пулăшас тĕлĕшпе пулса иртет.

Агитатор Морозов юлташ мĕнпур агитаци ĕçне вырăнти фактсемпе, колхоз ĕçĕпе çыхăнтарса пырать. Çавăнпа унăн калаçăвĕсем — усăллă тата витĕмлĕ.

Агитколлектив членĕсем ялти ĕççыннисем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса янă. Вĕсем час-часах спектакльсемпе концертсем, вечерсем иртгереççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ, ăмăрту хăмисем организацилеççĕ. Кăçал 2 уйăх хушшинче кăна агитколлектив вăйĕпе 7 доклад, 32 калаçу иртгернĕ, 3 хутчен спектакль лартса панă тата художествăллă пултарулăх вечерĕсем иртгернĕ, 7 номер стена хаçачĕ, вуншар боевой листоксем кăларнă.

Парторганизаци агитколлектива куллен ертсе пырать, ăна кирлĕ пулăшу парать. Агитаторсемпе семинар иртгерессине те кунта лайăх йĕркеленĕ.

Х. ЛИСИН. (Хамăр корр.).

Комсомолецсем пур ĕçе те пуçарса пыраççĕ

ШĂМĂРШĂ. Пирĕн колхозри комсомолецсем çуракине хатĕрленнĕ çĕре активлăн хутшăнчĕç. Вунă кун хушшинче уя 437 лав тислĕк кăлартăмăр, 4, 7 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 1,09 тонна кĕл пухрăмăр.

Уя тислĕк кăларассипе уйрăмăнах 2-мĕш бригада çумне çирĕплетнĕ комсомолкăсем—М. Майоровăпа Е. Фролова паха çитĕнÿсем турĕç. Ку комсомолкăсем задание 250 процент пурнăçа кĕртрĕç.

Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас енĕпе çамрăк комсомолец Коля Зиновьев аван ĕçлерĕ. Вăл икĕ кун хушшинче 90 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕ, задание 150 процент пурнăçа кĕртрĕ.

М. Лукиянов комсомолец та палăрчĕ. Вăл малтан хăйне çирĕплетсе панă 3-мĕш бригадăра кĕл пухса хума асăрхаттарса çÿрерĕ, кайран вара пĕр кун хушшинчех 2,90 центнер кĕл пухрĕ.

Федор Юманов комсомолеца 4-мĕш бригадăри лашасене сăнама çирĕплетнĕччĕ, унти лашасем аванланчĕç. Юманов куллех витере лашасем патĕнче çÿрет. Вăл лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслет, асăрханă çитменлĕхсене сиенчех пĕтерессишĕн кĕрешет.

Выльăх апатне салатса пĕтерессрен асăрхаса тăма И. Нянин комсомолеца хушнăранпа конюхсем улăма перекетлесе пуçларĕç.

Ялхуçалăх инвентарĕсене юсанă çĕре комсомолецсем лайăх хутшăнчĕç. Плугсемпе сÿресене, сеялкăсене пур бригадăсем те юсаса пĕтерчĕç.

Комсомолецсем колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелесе ячĕç. Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли икĕ посылка: 4 чăх, 2 килограмм çăмарта(?), 2 килограмм çу тата ытти япаласем ятăмăр. Комсомолецсем ирĕке тухнă Донбасс ачисене пулăшма 800 тенкĕ укçа пухса пачĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах М. Корикова(?) Н. Зиновьев аван ĕçлерĕç.

П. АЛЕКСЕЕВ.
ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Лондонри поляксен çĕнĕ организацийĕ чĕнсе калани

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Нумаях пулмасть Лондонра поляксен «Зъедночение Польске» (поляксен пĕрлĕхĕн организацийĕ) ятлă çĕнĕ организаци тунă. Организациллĕ комитета çаксем кĕнĕ: председатель—инженер Лукасяк, секретарь—адвокат Вилановский, казначей—инженер Шапиро, членсем—рабочи Лаптос тата моряк Быкальский.

Англире пурăнакан поляксене чĕнсе каланинче «Зъедночение Польске» организаци вĕсене пĕрлешме чĕнет. Çав чĕнсе каланинче çапла калать: «Халăха пĕрлештерес тени Польшăри мĕнпур организацисене тата ют çĕршывсенчи поляксен ушкăнĕсене халăх суйласа хунă пĕр политикăллă центра пăхăнтарас тени пулать. Вăл тата поляксен мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕр верховнăй командованине пăхăнтарас тени пулать. Çав командовани хăйĕн ĕçĕсемшĕн халăхăн политикăллă представительстви умĕнче ответлă пулса тăмалла. Вăл тата Англире пурăнакан поляксен США-ра, Совет Союзĕнче тата Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче пурăнакан поляксемпе тăвалла килĕштерсе ĕçлемеллине пĕлтерет. Вăл, юлашкинчен, Польша политикине Англи, США тата СССР политикипе килĕштермеллине пĕлтерет. Халăх çакăн пек пĕрлешни анчах пирĕн государствăна çĕнĕрен никама пăхăнман государство туса хума тата пирĕ малашне хăрамасăр пурăнма май пама пултарать. Çак принципсене тытса пырсан çеç эпир хамăра Балтикă тинĕсĕнче çирĕп база пама тата Лястовски Силезие пире тавăрса пама ыйтнипе пирĕн союзниксем пурнăçа кĕртме пулăшĕç. Çапла туни пирĕн экономикăпа çар хăватне ÿстерме пулăшĕ.

Çак принципсемпе ĕçлесен çеç эпир Хĕвелтухăçĕнче тĕрĕслĕхлĕ чикĕ тума пултарăпăр. «Мĕнпур демократиллĕ халăхсем çине, чи малтан пирĕн кÿршĕсем—славянсем çине таянса пырсан çеç эпир çăткăн Германи империализмĕ хапсăннисенчен сыхланса пурăнма пултаратпăр», —тенĕ чĕнсе каланинче.

«Эпир тăвас текен Польша чăн-чăн демократиллĕ Польша пулса тăмалла,—тенĕ чĕнсе каланинче.—Унта аплă халăх массисем — рабочисемпе хресченсем, интеллигенци тата мĕнпур ĕççыннисем ĕçе татса памалла».

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ЭССЕНПА ГАННОВЕР ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: мартăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германире Англин йывăр бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем тапăннă. Пуриччен те вăйларах Эссен хулине атакăланă, хула çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем нумай пăрахнă. Çавăн пекех тата Ганновер хулине те тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çав операцисенче 700—800 самолет пулнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН АНАÇАВĔСЕМ ÇИНЧЕН АРНОЛЬД ГЕНЕРАЛ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕн сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕ Арнольд генерал çапла каланă: союзниксен авиацийĕ пур фронтсенче те сывлăшра çар кĕтнинчен хăвăртрах пуç пулса тăма пуçлать, союзниксен авиацийĕ çапăçусенче малтан шухăшланинчен нумай сахалтарах çухатусем тăвать. Çавăнпа Америка авиацийĕ çĕр çинче пулăшса тăракан 36 пин çынна ĕçрен хăтарать. Çав çынсене авиаци илнĕ пулнă, анчах авиаци ĕçне вĕрентмен. Авиаци ĕлĕкхи пекех 17 çулхи çамрăксене вĕрентме килет (халĕ вăхăтлăха илме пăрахнă-ха).

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Кассинора пайăр çапăçусем пыраççĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, унти лару-тăру улшăнмасăрах тăрать. Союзниксен çарĕсен малти отрячĕсем пур секторсенче те активлă çапăçнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче тăшмана хирĕç артиллерипе минометсем персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Итали тата Югослави çыранĕсем патĕнчи судносем çине бомбăсем нумай пăрахнă, çавăн пекех тата Кассино районĕнче пĕр çĕре пухăнса тăнă нимĕç çарĕсене тапăннă. Кун каçа тăшманăн 19 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Кассино районĕнче çаплах йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Американецсен 5-мĕш армийĕпе акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнчи пур участоксенче те тата Анцио патĕнчи кĕпер умĕнчи укрепленире патрульсем çапăçнă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 600 вĕçев тунă. Тăшман авиацийĕ çапăçу хирне тухман.

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Анцио районĕнчи плацдарма тапăнса тăшман икĕ тĕлте пĕчĕк атакăсем пуçласа янă, американецсен чаçĕсем вĕсене иккĕшне те сирсе янă. Союзниксен артиллерийĕ Кассино районĕнче вăйлă персе тăнă, тăшмана çухатусем кÿнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çар объекчĕсене чылайĕшне тапăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килнĕ хыпарсем тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн 2-мĕшпе 5-мĕш дивизийĕсен чаçĕсем Приеполье нимĕçсен, Михайлович четникĕсен тата Недич отрячĕсен пысăк группировкине аркатса тăкнă. Темиçе кун хушши пынă çапăçусенче тăшман пысăк çухату тÿснĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Серби территорине кĕрсе кайнă. Гитлеровецсен çарĕсем Хĕвелтухăç Боснире Брчкопа Зворник енчен наступлени пуçласа янă.

Зворник патĕнче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Недич отрячĕсене аркатса тăкнă, çав отрядсем халăх çарĕ ирĕке кăларнă территорие кĕрсе кайма хăтланнă пулнă. Тăшман пысăк çухату тÿснĕ.

Германин пĕр дивизийĕн чаçĕсем халăх çарĕ ирĕке кăларнă территорие Отулин енчен татса кĕме хăтланнă, анчах та хаяррăн çапăçнă хыççăн вĕсене каялла сирсе янă, нимĕçсен 250 çын вилнĕ тата аманнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 100 салтакĕн тата 3 офицерĕн, çав шутра пĕр полковникĕн, виллине тупнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

Словенире çаплах хаяррăн çапăçаççĕ.

ЖЕНЕВА, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, фронтăн пур участокĕсенче те тăшман активлăрах çапăçма тытăннă. Хĕвелтухăç Боснире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем çаплах нимĕçсемпе усташсен пысăк вăйĕсемпе хаяррăн çапăçаççĕ, тăшмана пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Сербире фронтăн Ужице патĕнчи участокĕнче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем оккупантсенчен, Недич отрячĕсенчен тата Михайлович четникĕсенчен тасатаççĕ.

Черногорире халăх çарĕн тинĕс хĕрринчи ушкăнĕнче тăракан чаçсем нимĕçсемпе тата четниксемпе çапăçаççĕ.

Словенире çаплах Ново-Место сывăхĕнче çапăçаççĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ИТАЛИРИ РАБОЧИСЕНЕ ГЕРМАНИРИ КАТОРГĂНА ХĂВАЛАСА КАЯÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: юлашки тăвата уйăх çурăра нимĕçсем Германие Италири рабочисене пĕр миллион çынтан кая мар хăваласа кайнă. Вĕсене пурне те ирĕксĕрлесе Германири çар промышленноçĕнче ĕçлеттереççĕ.

РУМЫНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер хăй Румыни правительствине приказ панă. Çав приказ тăрăх, Коложвар районĕнче тăнă румынсен пысăк çар чаçĕсене Прут шывĕ хĕррине ямалла. Румынсен çав çар чаçĕсене Коложвар районне мартăн 10-мĕшĕнче илсе пынă пулнă, мĕншĕн тесен унта Венгри халăхĕпе Румыни халăхĕ хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Халĕ Румынине нимĕçсем пĕтĕмĕшпех оккупациленĕ. Румыни çарĕнче нимĕçсен «инструкторĕсем» туп-туллиех. Румыни территорин тĕрлĕ районĕсенче нимĕç гарнизонĕсем тăраççĕ. Румыни аэродромĕсене, чугун çулĕсене тата ытти çулйĕрĕсене те нимĕçсен техникĕсемпе инженернăй çарĕсем тĕрĕслесе тăраççĕ.

«Моргон тиднинген» хаçат çапла пĕлтерет: Антонескуна каллех Гитлерăн главнăй ставкине халех пыма хушнă. Галац хулинче (румынсен Дунай çинчи порчĕ) пысăк пăлханусем пуçланса кайнă. Румынсен 3-мĕш армейски корпусĕнчи салтаксен ушкăнĕсем, хăйсен чаçĕсене пăрахса тухнăскерсем, алла хĕçпăшал тытнă та халĕ Германипе Румыни çарĕсене хирĕç çапăçма пуçланă.

ГЕРМАНИ ÇАРĔН ÇАВ ТЕРИ ПЫСĂК ÇУХАТĂВĔСЕМ

Гитлерăн Румынири посланникĕ ирĕксĕрех йышăнни

СТАМБУЛ, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Румынсен «Универсул» ятлă хаçатĕнче çапла пичетлесе кăларнă: нимĕçсен Бухарестра мартăн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ пуххинче Германи посолĕ Киллингер сăмах тухса каланă. Вăл каланă тăрăх, «Германире кам та пулин вăрçăра вилменни пĕр çемье те тăрса юлман. Кашни çемьерех сахалтан та пĕр çын пĕтнĕ».

БОЛГАРИПЕ РУМЫНИЕ НИМĔÇСЕН ÇĔНĔ ÇАР ЧАÇĔСЕМ ÇИТНĔ ТЕКЕН ХЫПАРСЕМ

АНКАРА, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв журналисчĕсен Анкарари ушкăнĕсенче çакăн пек хыпар çÿрет: Болгарипе Румынин пур порчĕсене те нимĕçсен çĕнĕ çар чаçĕсем çитнĕ. Портсене пĕтĕмĕшпех гитлеровецсем тĕрĕслесе тăраççĕ. Халĕ унта васкасах оборона сооруженийĕсене вăйлатаççĕ, сывлăшран тапăнасран хÿтĕленмелли оборонăна та вăйлатаççĕ.

ÇĔНĔ КĔНЕКСЕМ

„Фронтра“

Чăваш АССР Государство издательстви çак кунсенче М. Н. Данилов-Чалдунăн «Фронтра» ятлă сборникне пичетлесе кăларчĕ. Сборнике пуриччен ытла автор 1943 çулта Действующи Çартан çырса янă «Аппăсемпе ывăлĕсем», «Кам айăплă?», «Вилĕмрен хăтăлнисем», «Политрук», «Вăрманта» калавсем тата «Шăтăк-çурăка хĕсĕннĕ фашистсем», «Пăлан хыççăн», «Красноармеец Самсонов», «Вĕретнĕ шыв» ятлă очерксем кĕнĕ.

Кĕнекере пурĕ 17 произведени.

М. Н. Данилов-Чалдун хăйĕн кĕнекинче Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсене, хăюллă паттăрсене, нимĕнле хăрушлăх умĕнче те шиклелсе тăман совет çыннисене кăтартса парать. Чалдун хăйĕн калавĕсемпе очеркĕсене çапăçусем хушшинче кĕске канăу вăхăтĕнче, блиндажсемпе землянкăсенче çырнă.

Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуçне хунă писатель-боецăн кĕнекине пур вулакансем те хапăлласах йышăнĕç.

Драмкружока пулăшу кирлĕ

КИШЛЕЙ. Алпно ялсоветĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем нумаях пулмасть драмкружок организацилерĕç. Ăна колхозница Василиса Кикашова ертсе пырать. Ку таранччен кружок членĕсем «Кăмăллă çын», «Сутра» пьесăсене лартса пачĕç. Уйрăмăнах И. Максимова, В. Кикашова, В. Алексеев юлташсем хăйсен ролĕсене лайăх вылярĕç. Спектакльсем пуçланас умĕн кружок членĕсем куракансене фронтри хыпарсемпе тĕнчери лару-тăрусем çинчен ăнлантарса пăраççĕ.

Драмкружок планĕ тăрăх, кăçал çĕнĕрен 6 пьеса лартса памалла.

Н. АМУРЦЕВ.

СУД

Тивĕçлипе айăпланă

«Янга Турмыш» колхозра 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Сабиков Садык тата конюх Семерханов Сафьян колхоз лашисене кирексĕр пăхнă. Колхоз правленийĕ Семерханова темиçе хут асăрхаттарнă пулин те, Семерханов лашасене тăрантарас ĕçе лайăхлатман, шултăра апата лашасене йĕркеллĕ çитерес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Ку çеç те мар, Семерханов лашасене час-часах вăхăтра апат паман, çĕрĕ-çĕрĕпе выçă тăратнă тата шăварман.

Февралĕн 13-мĕшĕнче колхоз витинче пĕр лаша ÿкнĕ те тăраймасăр выртнă. Колхоз председателĕ Салахутдинов Семерханов конюха çав лашана тăратма хушнă. Анчах Семерханов ирччен витене кĕрсе те пăхман, ÿкнĕ лашана тăратма шутламан. Ирччен çав лаша вилнĕ.

Лашасем çине çапла чунсăр пăхнине пула 1-мĕш бригадăра январьпе февраль уйăхĕсенче 7 лаша вилнĕ, ыттисем те питĕ начарланнă.

Бригадир Сабиков Садык конюхсем лашасене мĕнле пăхнипе интересленмен, вĕсен ĕçне тĕрĕслемен. Правлени начарланнă лашасене кÿлме чарнă пулсан та, Сабиков колхозниксене лашасем панă. Газаев колхознике, çапла, капма тăратнă лашана арман кайса килме хушнă. Çав лаша вара армантан таврăнсанах ÿксе вилнĕ.

Колхоз лашисем çине çапла чунсăр пăхнăшăн колхоз правленийĕ Семерхановпа Сабикова суда панă.

Комсомольски районри халăх сучĕ, çак ĕçе пăхса тухса, Семерханова виçĕ çул, Сабикова икĕ çул хушши тĕрмере усрамалла приговор йышăнчĕ тата вĕсенчен вилнĕ лашасен хакне шыраса илмелле турĕ.

КАТЫКОВ,
Комсомольски районри прокурорăн помощникĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чебторга экспедиторсем, бухгалтерсем, калькулятор, зootехник кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Чебторг. 2—1.

Чăвашпотребсоюзăн учебно-курсовой комбинатне старши бухгалтер кирлĕ. Хватер параççĕ. Столовăй валли старши бухгалтер кирлĕ.

Чăваш АССР-ĕн Наркомсобесĕ пур инвалидсене те çакăн çинчен пĕлтерет: Канаш протез мастерскойĕн виçекен техникĕ Наркомсобесра кашни уйăхрах уйăхăн виççĕмĕш кунĕнче кунĕпех, тăваттăмĕш кунĕнче 12 сехетчен ĕçлет. 2—1.

Март уйăхĕнче Чăвашпотребсоюзĕн вĕренÿ комбиначĕ райсоюзсен главнăй бухгалтерĕсен курсне вĕренме илет. Çав курса учреждени ĕçленĕ çынсене илеççĕ. Адрес: гор. Чебоксары, ул. Театральная, 1/5, Учкомбинат.

Шупашкарти пир-авăр фабрикин ОРС-не подсобнăй хуçалăхра ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: агроном, уйхир бригадирĕ, рабочисем. ОРС-ăн хăйĕн столовăй пур. Адрес: гор. Чебоксары, ул. Ленинградская, 26.

Шупашкарти арман комбиначĕ 1-мĕш номер арманта тĕштырă кирек мĕн чухлĕ те авăртса пама пултарать. Адрес: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15.

Виçĕ çулхи ăйăр çухалнă. Тĕсĕ—çĕрен, çамки çинче шурă тăрăх пур. Вăл декабрĕн 24-мĕшĕнче Сĕнтĕртен çуни-мĕнĕпех тарнă. Пĕлекенсене Сĕнтĕр районĕнчи „Краснофлотец" колхозăн правленине пĕлтерме ыйтатпăр.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Ш 00067 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59—12 п. л. Тираж 14.420 экз.